*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

22 (2535) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
март пуш 27

ЭРНЕКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă



## КĔСКЕН

**Кăçал республикăра ялхуçалăх культурисене 565 пин гектар çинче туса илмелле. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 5,6 пин гектар ытларах. Çав шутран 49,7 процент пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем, 6,4 процент – çĕрулми, 0,8 процент – пахчаçимĕç, 41 процент – выльăх апачлăх культура. Ялхуçалăх министрĕн сăмахĕсем тăрăх – Чăваш Енре 580 пин тонна тырă, 680 пин тонна çĕрулми туса илмелле. Патăрьел, Комсомольски, Çĕрпӳ районĕсенче агрегатсем хире тухнă, кĕрхи тулă пуссисене апатлантараççĕ.**

**Хальхи вăхăтра республикăра культура тытăмĕнче 6 пине яхăн çын тăрăшать. Чăваш Енре 537 библиотека, 750 культурăпа кану учрежденийĕ, 16 музей, ачасем валли уснă 46 искусство шкулĕ, патшалăх шайĕнчи 3 архив тата муниципалитет тытăмĕнчи 26 архив ĕçлет. Юлашки çулсенче Чăваш Енре 5 çĕнĕ клуб ĕçлеме пуçланă. Иртнĕ çул муниципалитетăн культура учрежденийĕсене çĕнетме федераци бюджетĕнчен 15,2 млн тенкĕ уйăрнă.**

ЯЛЙЫШ — КИЛ — ХӲТЛĔХ — СЫВЛĂХ — ТĔПЕЛ

**ПАЯН кун тăршшĕ 12 сехет те 42 минут. Уйăх тулса пырать. Венедикт кунĕ. Çак кун тĕлне выльăх-чĕрлĕх йăптăх тăкма пуçланă. Ĕне выльăх çăмне туранă. Кунĕ сивĕ пулсан тепĕр эрне те çавнашкалах тăрĕ. Çак кун аслати авăтни – çуллалăк тухăçлă та пулăхлă пуласса систернĕ.**

**ЫРАН – Александр кунĕнче – чайкăсем вĕçсе килни – пăр часах каясса.**

**ВИÇМИНЕ – Савин кунĕнче – ăшă пулсан çуркунне те ăшă пулĕ.**

### Халăх сăнавĕ

Мартра тытнă карас пулă вăлчасăр пулсан май уйăхĕнче юханшыв тулли пулмĕ.

Çуркунне шăши нумай пулни – çуллалăк тухăçсăр пуласса.

Çăхансем ушкăнăн кранклатни – çанталăк пăсăласса.

Куракасем йăвана ларсан виçĕ эрнерен акана тухма юрать.

Çуркунне кăткă таса та тутă вăрансан тулă ăнса пулĕ.

Кайăксем йăвине хĕвел енне çавăрсан – çу сивĕ килĕ.

## ПАХЧИ-ПАХЧИ

### Паян-ыран тумалли ĕçсем

**САДРА:**

✓ Сĕткенпе туличчен улма-çырла йывăççĕсене касса кĕскетмелле, тымар хунава кăкламалла.

✓ Çĕр çумне авса хунă хăмла çырли хунавĕсене çĕклемелле. Ытлашши тата йăваш хунавсене иртмелле. Хунав тăррин шăннă вĕçĕсене касмалла.

✓ Хурлăханпа крыжовник тĕмĕсене кĕркунне касса тирпейлемен пулсан халĕ йĕркене кĕртмелле.

✓ Хура хурлăхан тĕмне лайăх пăхса çавăрмалла. Хулăн та мăнтăр папак курсан ăна пĕр хĕрхенмесĕр татса çунтарăр. Сăвăс «çурчĕ» вăл. Сиенленнĕ папак ытла та нумай пулсан турата ушкăнĕпех касма юрать.

✓ Улма-çырла йывăççĕсем çине хурткăпшанка çыпăçтаракан тăрăхсем (ловчие пояса) çирĕплетмелле.

✓ Çĕр çырлине (клубника) пăхмалла. Хăмăр çулçăсене иртмелле, йăран хушшине кăпкалатмалла, тĕм тымарĕ çаралнă пулсан ун тавра тăпра хумалла.

**ПАХЧАРА:**

✓ Çĕр чавма пуçличчен пахчана органика удобренийĕ – компост, навус, торф – сапаласа тухмалла.

✓ Март вĕçĕнче – апрель пуçламăшĕнче уçă çĕре сивве чăтакан культурăсене акмалла: редис, петрушка, сельдерей, пастернак, çарăк, салат, шпинат, укроп, кинза. Вăрлăх хăвăртрах шăтса тухтăр тесен ăна пленкăпа витмелле.

✓ Теплицăна пахчаçимĕç калчине куçарса лартмалла.

✓ Нумай çул ӳсекен культурăсем пирки те манмалла мар. Сухан, кăшкар ути, ревень йăранĕсене кивĕ çулçăран тасатса кăпкалатмалла. Кăпкалатнă çĕр хăвăртрах ăшăнать, ӳсен-тăран ешĕл çимĕçĕпе маларах савăнтарĕ.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Йăвана хур лармасть

**? Эпир 10 çул хур усратпăр. Анчах ку таранччен хур ăçта килнĕ унта çăмарта тунине курман. Мĕн тумалла-ши?**

**Р. ЛЬВОВА. Çĕрпӳ районĕ, Паваркасси.**

Хур ами хăйне уйăрса панă вырăна çăмарта тума вĕрентĕр тесен ăна валли уйăх маларахах йăва вырнаçтараççĕ. Унта вĕсем larма хăнăхнă айсарăмнех хураççĕ. Çăмарта тума пуçличченех кашни кун йăвана ларта-ларта илеççĕ. Хайхи вырăна кунсерен кĕрте-кĕрте кăларсан та хур хăнăхма кирлĕ.

Хăш-пĕр хур çăмарта хурса памасăр та йăвана ларасшăн мар. Нумай çул хур усракансем ун пек чухне мая çăмарта хурса параççĕ, унтан хур амине йăвана лартса мĕн çăмарта тăвиччченех пусĕнчен, çурăмĕнчен ачашлаcа лараççĕ. Çăмартине тусан та çийĕнчех кăларса ямаççĕ.



### Вырнаçтарасчĕ

**? Эпĕ 85 çула кайнă учитель-ветеран, тухса çӳрейместĕп. Хаçатсем вуланипе кăна чуна лăплантаратăп. Çутçанталăк газĕпе усă куриччен эпир баллонлă газпа усă кураттăмăр. Чылай вăхăт иртнĕ пулин те пушă баллонсене ăçта вырнаçтармаллине пĕлеймеcтĕп. Тимĕр-тăмăр пуçтаракансем ăна илмеççĕ.**

**Иван ВАЗЯКОВ. Хĕрлĕ Чутай районĕ, Мишеркасси.**

Хисеплĕ Иван Яковлевич, сире хурав парассишĕн газпа çыхăннă темиçе предприятие те шăнкăравларăмăр. Пурте тенĕ пекех тахçан газ баллонĕ пухнине, анчах халĕ ку енĕпе ĕçлеменнине пĕлтерчĕç. Шупашкарта вырнаçнă «Согласие» автозаправка станцийĕ кăна («Хозяйственный проезд, д. 19 «А», т. 8(8352) 62 88 88) ырă хыпарпа савăнтарчĕ: «Илсе килччĕр, пĕр баллоншăн 150 тенкĕ тӳлетпĕр. Ялтан 50 е ытларах баллон пухса парас пулсан хамăр та пырса илме пултаратпăр. Шăнкăравласа пĕлтерччĕр».

### Ăшă йăран

**? Пускилĕн пахча çимĕçĕ яланах йăтăнса пулать. Çакна вăл «ăшă йăран» тунипе çыхăнтарать. Мана та çавнашкал йăран тума вĕрентеймĕр-ши?**

**Иван ИЛЬИН.**

Йăран хăйне хăй ăшăнса тăнине çапла калаççĕ. «Ăшăтаканни» выльăх айсарăмĕ, тислĕк, çулнă курăк, ӳсен-тăран юлашки – урăхла каласан, çĕрĕçсемĕн ăшă кăларса тăракан япала. Ăна пĕр кĕреçе тарăнăш чавса кăларнă лаптăка 30-40 см хулăнăш хураççĕ. Çиелтен паха çĕрпе витеççĕ. Шӳтерсе шăвараççĕ. Тислĕкпе ӳсен-тăран юлашки хĕрнĕçемĕн тăпра температури ӳссе пырать. Апла пахчаçимĕçĕ те лайăх ӳсĕ. Ăшă йăран çинче çĕрулми, хăяр, кавăн, кабачок, ешĕл çимĕç уйрăмах лайăх çитĕнет.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

### Акса ĕлкĕреймен-и? Темех мар

Помидор вăрри акса ĕлкĕреймен-и? Ан пăшăрханăр, «кая юлнисем» валли хăвăрт пулакан томат ушкăнĕ пур, вĕсене апрель варринче те акма юрать: **Дружок F1, Леопольд F1, Семечко-Синбад F1, Ля-ля-фа F1 гибридсем; Рыжик, Ракета, Гаврош, Аляска сортсем.** Пахчана куçарса лартнă тĕле (июнĕн пĕрремĕш çурри) калча çирĕпленсе ĕлкĕрет, чи кирли вара – ытлашши ӳссе каймасть. Çав вăхăта унăн 5-6 çулçă, çирĕп туна, пирвайхи чечек папки те пулать. Кунашкал калча куçарса лартнине те çăмăллăн чăтса ирттерет.

Калча туса аппаланас килмесен тӳрех йăран çине акмалли вăрлăх суйласа илме пулать. **Бони-М, Бета сортсем, Биатлон F1 гибрид кĕске хушăрах тухăç пама пултарать.**

Вăрлăха май варринче-вĕçĕнче, çĕр аванах ăшăнса çитсен акаççĕ. Кун пек чухне вăрлăха шӳтерме кирлĕ мар, ăна типĕлле нӳрлĕ çĕре акмалла. Пленкăпа е лутрасилпа хупламалла. 7-10 кунран вăл шăтса тухать. Ку вăхăт тĕлне пленка айне пĕкĕ лартмалла. Сивĕсем иртсен (июнĕн 10-мĕшĕ хыççăн тейĕпĕр) пленкăна уçма юрать. Вăрă пайĕ йĕркеленсен ӳсен-тăрана ялан ӳсмелли вырăна куçарса лартмалла, пĕр-пĕрин хушшине 30х30 см хăвармалла. Ытти чухнехи пекех пăхса тăмалла: шăвармалла, кăпкалатмалла, апатлантармалла.

Фитофтороз ересрен ӳсен-тăрана çулçине лектермесĕр шăвармалла; аялти çулçăсене вăхăтра татса тăмалла; сиенленнĕ çимĕçе вăхăтра пухса пахча тулашĕнчен кăларса çунтармалла, иртнĕ çулхи помидор аврисем йăваланса выртмалла мар.

## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Хисеплĕ вулакансем! Кăçалхи иккĕмĕш çур çулта «Хресчен сасси – Кил» хаçат уйрăм кăларăмпа тухма пăрахать. Июль уйăхĕнчен пуçласа вăл 8 страницăпа тухса тăракан «Хресчен сасси» хаçат ăшĕнче пулĕ. Унăн индексĕ – 54838. Халĕ хăшĕ-пĕри «Хресчен сасси – Кил» ятлă уйрăм хаçата çырăнса илме сĕнни «Хыпар» Издательство çурчĕпе пачах та çыхăнман!**




Кредит
на развитие личного подсобного хозяйства

г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.

## ЭСИР ЫЙТНӐЧЧӖ

# Ватлӑх куҫран пӑхсан

**«Хресчен сасси» хаҫата тухма пуҫланӑранпах ҫырӑнса илетӗп. Чунтан юратса вулатӑп. Тавах пархатарлӑ ӗҫӗршӗн. Ҫак кунсенче 80 ҫул тултаратӑп. Ҫак ӳсӗме ҫитсен пенси хушӑнать теҫҫӗ. Ӑна ӑҫта кайса илмелле, мӗнле хутсем хатӗрлемелле? Ҫавӑн пекех ҫакна та пӗлес килет: мана пӑхма ҫын кирлӗ. Хамӑн тӑвансен пӑхма юрать-и? Юрать пулсан хутсем тутарма ӑҫта каймалла?**

**Иван ИВАНОВ. Ҫӗрпӳ районӗ, Тавӑшкасси.**

Хисеплӗ вулаканӑмӑр! Раҫҫей Федерацийӗн ӗҫ пенсийӗсем ҫинчен калакан саккунпа килӗшӳллӗн ватлӑхпа паракан ӗҫ пенсин ҫирӗплетнӗ тӳлев виҫине ҫын 80 ҫула ҫитсен ниҫта кайса ҫӳремесӗрех, заявлени ҫырмасӑрах икӗ хут ӳстерсе параҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра пенсин ҫирӗплетнӗ тӳлев виҫи (фиксированный базовый размер пенсии) 3935 тенкӗпе танлашать. Апла сирӗн пенси шӑпах 3935 тенкӗ чухлӗ ӳсӗ. Ҫакӑ ватлӑхпа паракан ӗҫ пенсийӗ илсе тӑракансене кӑна пырса тивет. Енчен те пенсионер инвалида тухнипе е тӑрантаракана ҫухатнипе пенси илсе тӑрать пулсан 80 ҫула ҫитсен вӗсен пенсин ҫирӗплетнӗ тӳлев виҫи ӳсмӗ.

80 ҫула ҫитнӗ ҫынна пӑхса тӑракан ниҫта та ӗҫлемен, ӗҫпе тивӗҫтерекен службӑра тӑман вӑйпитти гражданина уйӑхсерен компенсаци тӳлеҫҫӗ. Ҫав компенсацие тивӗҫес тесен ватӑ ҫынна пӑхаканӑн урӑх ниҫта та ӗҫлеме юрамасть. Тӑван пулни е пӗрле пурӑнни ниме те пӗлтермест. Вырӑнти пенси уйрӑмне ҫак документсене тӑратмалла: сире пӑхма килӗшнӗ ҫыннӑн паспорчӗпе ӗҫ кӗнекийӗ тата хӑвӑрӑн ӗҫ кӗнеки; сире пӑхас текен ҫын ӗҫпе тивӗҫтерекен службӑра тӑманнине ҫирӗплетекен справка; вӗренӳ учрежденийӗнче вӗренет пулсан унтан илнӗ справка; сире пӑхакан ӑҫта пурӑннине палӑртса ҫырнӑ заявлени; эсир хӑвӑра ҫав ҫын пӑхнипе килӗшнине пӗлтерсе ҫырнӑ справка. Вырӑнти хӳтлӗх уйрӑмӗнче сире ҫаксем ҫинчен тата тӗплӗнрех ӑнлантарма тивӗҫ.

## ХАМӐРА ЮРАТСА

# Ҫамрӑклатакан коктейль

Пӗрер кашӑк хура хурлӑхан, матрӳшке курӑкӗн (душица) типӗтнӗ ҫулҫи, 3 кашӑк чухлӗ пӗрлӗхенпе (костяника) хура хӑмла ҫырли ҫулҫи (ежевика) хутӑштармалла. Термоса хайхи хутӑша 1 кашӑк ямалла, тин вӗретнӗ 2 стакан шыв хушса 20 минут тытмалла, сӑрӑхтармалла, ҫуршар стакан ӗҫмелле.

# 50 ҫултан иртсен

Атеросклероз аталанасран ирсерен, выҫварла, курӑк чейӗ ӗҫме хушаҫҫӗ. Ӑна хура хурлӑхан, ҫӗр ҫырли (земляника) ҫулҫинчен, клевер, ҫӑка чечекӗ, сар ҫип утинчен (зверобой) хатӗрлеме юрать. Юн тымарӗсен пиҫӗлӗхне упрама ыхрапа хутӑштарнӑ шур ҫырли (клюква) пулӑшать. Ҫырлапа ыхра нимӗрне пыл хушса ҫимелле. Ҫак хутӑша ҫуркуннепе кӗркунне кунне 2 хут, апат умӗн, пӗрер кашӑк ҫимелле. Юн тымарӗсене сарма кунне 3 хут, апат умӗн ҫур сехет маларах, ыхрапа хутӑштарнӑ лимон сӗткенӗ ӗҫмелле.

## ПӖЛНИ ПӐСМӖ

# Пӳре сывмарлансан

**Нумаях пулмасть «почечная недостаточность» текен диагноз лартрӗҫ. Мӗн тенине пӗлтерет ку?**

**Алина МИХАЙЛОВА.**

Пӳре кирлӗ пек ӗҫлеменнине, сиенленнине пӗлтерет. Сире лартнӑ диагноз пӳре тӗртӗмӗ арканнипе тата унти пӗчӗкҫӗ юн тымарӗсем вилнипе ҫыхӑннӑ. Ҫак сӑлтавпах организмран наркӑмӑшлӑ веществосем япӑх тухаҫҫӗ.

Сывлӑш пӳлӗнни, юн сахалланни, ирсерен кӑмӑл пӑтранни, хӑвӑрт ывӑнни, шӑк тӗссӗр пулни – пурте ҫакӑн паллисем. Ҫӗрле 2-3 хут тӑрса шӑни те пӳре йӗркеллех пулманнине пӗлтерет. Ҫакӑ уйрӑмах 50 ҫултан ҫамрӑкрах ҫынсене пырса тивет.

Пӳрепе чирлисен час-часах гемоглобин шайӗ чакать, организмра фосфорпа кальци ҫаврӑнӑшӗ пӑсӑлать.

Мӗн ҫиме юрать-ха? Пӳрепе сывмаррисен белоклӑ апат сахалтарах ҫимелле. Пӳрене ҫӑмӑлрах килӗ. Апла пулсан сыр, тӑпӑрчӑ, мӑйӑр, кӑмпа, калиллӗ улма-ҫырла (цитрус ҫимӗҫӗсем, абрикос, виноград, банан, типӗтнӗ улма-ҫырла), ҫӑкӑр, макарон, ҫӑнӑхран пӗҫернӗ изделисем рационран тухса ӳкмелле. Кунне 50 грамм майлӑ аш-какай, 1 стакан сӗт е кефир ҫиме-ӗҫме юрать. Эрнере 3 ҫӑмартаран ытла ҫимелле мар. Хӑйма, мороженӑй, пыл, салӑ астивме юрать.

Тинӗс купӑсти (ламинари) аван. Унта витаминсемпе микроэлементсем, уйрӑмах йод, ҫавӑн пекех белок, углевод, клетчатка чылай. Тинӗс купӑсти лайӑх ирӗлет, иммунитета ӳстерет.

## ШУТА ИЛМЕ

# Юн ҫӑра пулсан...

**Ҫӑра юн пӗчӗкҫӗ юн тымарӗсене лексе ӑна кислородпа тата тутлӑхлӑ япаласемпе тивӗҫтерейместь. Халӑх медицининче юна шӗветме темиҫе тӗрлӗ рецепт пур.**

• 2 стакан пыл, 1 стакан вӗтетнӗ укроп вӑрри, 2 кашӑк чухлӗ авӑртнӑ валериан тымарӗ илсе хутӑштармалла. Ҫакна пӗтӗмпех тин вӗретнӗ 2 л шыва ярса пӗр талӑк термосра тытмалла. Кайран сӑрӑхтармалла. Пӗр уйӑх таран апат умӗн ҫур сехет маларах пӗрер кашӑк ӗҫмелле.

• Кантӑк савӑта 1 чей кашӑкӗ чухлӗ вӗтетнӗ вӗлтӗрен, 1 стакан вӗретнӗ шыв ярса хупласа лартмалла, 45 минутран сӑрӑхтармалла. Пӗр уйӑх таран, ирпе-каҫпа, апат умӗн ҫур сехет маларах, 1-2 кашӑк ӗҫмелле. Ку настой юна тасатать, веществосен ҫаврӑнӑшне лайӑхлатать.

• Эмаль савӑта 1 кашӑк чухлӗ типӗтсе вӗтетнӗ хӑях курӑкӗ (осока) хумалла, 1 стакан вӗрекен шыв ярса «шыв мунчинче» 15 минут тытмалла, пӳлӗм температуринче сивӗтмелле. Сӑрӑхтарса кӗленчене ямалла, хупламалла. Пӗр уйӑх таран, ирпе-каҫпа, апат умӗн ҫур сехет маларах, 1-2 кашӑк ӗҫмелле. Настоя икӗ талӑкран ытла упрамалла мар, кашнинчех ҫӗнӗрен хатӗрлемелле.

• Тӗттӗм хӗрлӗ тӗслӗ улма-ҫырлапа пахчаҫимӗҫӗ те юна шӗветме пулӑшать. Ку вӑл – чие, виноград, хура хӑмла ҫырли (ежевика), шур ҫырли (клюква), палан, шӑлан (шиповник), кӗтмел (брусника), гранат, хӗрлӗ кӑшман. Ҫак ҫимӗҫсене кашни кун ҫиме тӑрӑшмалла.

• Чие ҫырли, тин татни те, шӑнтса хуни те, апат ирӗлтерес ӗҫе лайӑхлатать.

• Чие сӗткенне ӗҫсен пыршӑлӑх палочки сехет хушшинче вилет.

• Чие сӗткенне сӗтпе ӗҫсен (1:1) ӳслӗкрен хӑпма, температурӑна чакарма пулать.

• Чие сиропӗ – ҫӑра сурчӑка кӑларма пулӑшакан лайӑх хатӗр.

## ШУТ-ХИСЕП

✓ Йӗкерешсем ытларах камсен ҫуралаҫҫӗ тетӗр? Статистикӑпа килӗшӳллӗн 37-38 ҫулти хӗрарӑмсен. Ҫак ӳсӗм хыҫҫӑн вара харӑсах икӗ е ытларах ача ҫураласси тӑруках чакать. Паллах, искусствӑлла майпа ҫуратакансем ку шута кӗмеҫҫӗ.

✓ Ученӑйсен шучӗпе йӗкерешсем ҫураласси ашшӗ-амӑшӗ ӑҫта пурӑннинчен те килет. Вӑтам климатра пурӑнакансен, шӑрӑх ҫӗршывра пурӑнакансемпе танлаштарсан йӗкӗрешсем ытларах ҫуралаҫҫӗ.

✓ 1895 ҫулта Франци биологӗ Д. Эллин хӑйне евӗр пӗтӗмлетӳ тунӑ: ҫуралакан кашни 85 ача пуҫне тӗнчене пӗр йӗкӗреш килет, 85 йӗкӗреш пуҫне – пӗр виҫҫӗреш, 85 виҫҫӗреш пуҫне – пӗр харӑс 4 ача.

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*

## РЕКЛАМА, ПӖЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТӐП / ПРОДАЮ*

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**6. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, навоз. Доставка. Т.8-905-197-40-19.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**29. Косилки,** грабли, фрезы, **опрыскиватели,** картофелесажалки, **доильные аппараты.** ДОСТАВКА! Т.: 89379559802, 89373758095.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74. Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

## МĂНКУН УМĔН

# Чун-чĕре те таса пултăр

**? – Мăнкун умĕн пӳрт çăвассине кам шутласа кăларнă-ши? Халĕ тирпейлĕ пурăнатпăр та, кашни çулах тăвас килмест çакна.**

**Игнатий атте (СУРАНОВ) Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ хуравлать:**

– "Чăвашсен юрать Мăнкун пур – çулталăкра пĕрре пӳрт çăваççĕ", – тесе каланă иккен манăн тăван, Канаш педучилищинче ĕç урокĕн вăрттăнлăхĕсене вĕрентекенскер. Унăн сăмахĕ пулас учительсене хăйсенчен мăшкăлласа кулнă пекех туйăннă. Çавăнпа чылай çул иртсен те кӳреннипе тарăхни сивĕнменччĕ вĕсен, çакăн пирки мана ĕнер пулнă евĕр каласа панăччĕ. Тĕрĕссипе вара çак йăла чăвашсемпе те çыхăнман, Мăнкунпа та. Эпир ăна авалхи иудейсенчен (еврейсенчен) илнĕ. Вĕсем Иисус Христоса Турă Ывăлĕ тесе йышăнманнипе Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăнине те нимĕн вырăнне те хумаççĕ. Анчах çуркунне, март вĕçĕпе апрель пуçламăшĕнче, пур еврей те чăтăмсăррăн кĕтекен уяв – Песах (халĕ эпир усă куракан Пасха сăмах шăпах çакăнтан пулса кайнă) – пур. Хăйсен мăн аслашшĕсем ĕлĕк-авал Египет халăхĕн пусмăрĕнчен хăтăлнине асăнса тăваççĕ ăна. Çакăн чухне çĕпрепе е кăвас чустипе йӳçĕтсе пĕçернĕ çăкăр таврашĕ çиме юрамасть. Çиме юраманнисĕр пуçне кил-çуртра та пулмалла мар ун пек япала. Çавăнпа еврей хĕрарăмĕсем ăçта та пулин (калăпăр, сĕтел сунтăхĕнче е урайĕнче) йӳçĕтнĕ çăкăрăн тĕпренчĕкĕ те ан юлтăр тесе пĕр эрне хушши тăрăшаççĕ: шăлаççĕ, çăваççĕ, тасатаççĕ. Каярах вара православи тĕнĕпе пурăнакансем те çак йăлана йышăннă. Анчах çиме юраман çăкăр тĕпренчĕкĕ шырамастпăр эпир, Турă чиркĕвĕнчи чи аслă уява тивĕçлĕ кĕтсе илес сăлтава мала хуратпăр. Çак сăлтавпах святой аттесем Мăнкун умĕн çирĕп типĕ тытмалли йĕрке тунă. Типĕ тытса, çылăхран ӳкĕнсе кĕтсе илмелле ăна. Кил-çурт кăна мар, чун-чĕремĕр те таса пултăр, мĕншĕн тесен Павел апостол вĕрентнĕ тăрăх эпир те Чĕрĕ Туррăн çурчĕ пулатпăр (2 Кор. 6, 16).

## АН ТА КАЛА

# Купăс сасси – чун уççи

Ĕлĕкрен купăс хисепре пулнă. Ялсенчи клубсенче кану каçĕсем, ял вăййисем купăссăр иртмен. Эпир те мĕн пĕчĕкрен аттепе пĕрле пиллĕкĕн купăс калама вĕреннĕ. Эпĕ салтакран килсен Шупашкарти халăх пултарулăх çуртĕнче çулталăк хушши баянистсен курсĕнче вĕрентĕм. Ун хыççăн Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинче виçĕ çул музыкăна вĕрентĕм. Алла диплом илсе малтан тăван Кунер клубĕнче, унтан Ырашпулăхĕнчи культура çуртĕнче баянист пулса ĕçлерĕм. Каçсерен купăс калама юратакансем клуба пухăннисене, ял вăййисене хутшăнакансене тĕрлĕ юрă-ташă кĕвĕçеммипе савăнтараттăмăр. 50 çул хушшинче миçе каччăна купăс каласа салтака ăсатман пулĕ. Пĕр туй та купăссăр иртмен. Халĕ пăхатăн та тĕлĕнетĕн: çамрăксем купăс калама вĕренесшĕн мар. Туй пырать-и, йĕкĕте хĕсмете ăсатаççĕ-и – купăс сасси илтĕнмест.

Купăс сасси – чун уççи. Ăна тăсса ярсан чун хĕпĕртет. Ĕлĕкхи йăлана манас марччĕ, хулапа ялсенче купăс сассипе, пурнăç илемĕпе пурăнасчĕ.

**Вячеслав ПЕРОВ. Куславкка районĕ.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР



### Килти сыр

**1 кг тăпăрчă, 1 л сĕт, 1 çăмарта, 1 чей кашăкĕ тăвар, 100 г услам çу, 1 чей кашăкĕ уксуспа йăвашлатнă апат соди.**

1. Сĕт çине тăпăрчă ярса вăтам çулăм çинче пăтратса тăрса 7-10 минут майлă пĕçермелле.

2. Пулнă массăна марля витĕр сăрăхтармалла. Унтан çăмарта, тăвар, апат соди, услам çу хушса йăваш çулăм çинче тата 3-4 минут пĕçермелле. Тăтăшах пăтратса тăмалла.

3. Хатĕр массăна сивĕтмелле, савăта хурса хытма холодильника лартмалла.

### Манник

**1 стакан манна кĕрпи, 1 стакан сахăр, 1 стакан кефир, 4 çăмарта, 1,5 стакан çăнăх, уксуспа е лимон сĕткенĕпе йăвашлатнă чĕптĕм апат соди, çатма тĕпне сĕрмелĕх тип çу.**

**Илемлетме: хурлăхан, хăмла çырли.**

1. Манна кĕрпине кефирпа хутăштарса 10-15 минутлăха ăшă вырăна лартмалла. Çак вăхăтра вăл лайăх шӳсе çитĕ. Унтан сахăр, лăканă çăмарта, çăнăх, йăвашлатнă апат соди хушса тепĕр хут пăтратмалла.

2. Тип çупа сĕрнĕ çатма çине хатĕрленĕ чустана ярса якатмалла.

3. Çиеле çырлан пĕр пайне хумалла.

4. 180-200 градус таран хĕртнĕ духовкăра 25-35 минут майлă пĕçермелле. Кайран юлнă çырлапа илемлетсе сĕтел çине лартмалла.

### Пăрçа яшки кĕрпепе

**1 л шыв, 1 стакан пăрçа, 1 стакан урпа, 1/2 кишĕр, 1/2 пуçлă сухан, 1/2 петрушка тымарĕ, 1 кашăк тип çу, ешĕл çимĕç, тăвар.**

Пăрçана каçпа шӳтерме лартмалла. Ирпе пăрçана урпапа хутăштармалла, шывне тăкмасăрах пĕçерме лартмалла. Петрушка тымарне, кишĕре, сухана тăваткăлласа турамалла, тип çупа ăшаламалла. Тăвар калаттарса ешĕл çимĕç хушмалла. Типĕ тытнă вăхăтра çимелли кăнтăр апачĕ пулчĕ те.

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Кая юлтăм-ши?

**? Пăрăç калчи тума кая юлтăм пулĕ. Мĕн тумалла-ши?**

Вăрлăха 4-6 сехет майлă 40-50 градус ăшă шывра тытăр. Унтан ик-виç кун 25-30 градус ăшăра нӳрлĕ пусма татки çинче выртчăр. Çакăн хыççăн ăна кăштах типсе çитсен ешчĕкри çĕр çине 1-1,5 см тарăнăшне акăр. Çиелтен хăйăрпа сапса пленкăпа витĕр. 3-4 кунран вăрлăх шăтса тухĕ. 25-28 градус ăшăра тытмалла, анчах тăпри типсе ан кайтăр.

### Калча чирлесшĕн

**? Темшĕн помидор калчин çулçи типме пуçларĕ. Унччен маларах пĕтĕмпех йĕркеллĕччĕ. Мĕнпе çыхăннă-ши?**

Калчан аялти çулçисем типни темиçе сăлтавпа çыхăнма пултарнă.

Пĕрремĕшĕ, ĕмекен сиенлĕ хурткăпшанкă ерни. Тимлесе пăхсан çулçă çинче куçа аран-аран курăнакан пăнчăсем асăрхама пулать. Кун пек чухне калчана «Битоксициллин», «Фитоспорин» препаратсемпе пĕрĕхтерни вырăнлă.

Иккĕмĕш сăлтав – тăпрара тăвар концентрацийĕ пысăк пулни, çавна май çулçă шаннăн курăнать. Виççĕмĕшĕ – тутлăхлă апат çитменни. Ӳсен-тăрана комплекслă минерал удобренийĕпе апатлантармалла. Калăпăр, «Люкс», «Идеал» йышшипе.

### Тĕрĕс упрамалла

**? Хăяр вăрлăхĕ миçе çулччен упранать?**

Лайăх упрасан 8-10 çулччченех шăтаслăхне çухатмасть. Хăяр вăрлăхне типĕ те сулхăн вырăнта тытмалла. Вăрлăх шăтаслăхне çухатни чи малтанах сывлăшри нӳрĕк пысăк пулнипе çыхăннă. Вăрлăх хăвăрт «сывланипе» нӳрĕк нумай тухать, çавна май вăрă майĕпен кăвакарма пуçлать: унта наркăмăшлă япаласем пухăнаççĕ. Ку паллах шăтаслăха чакарать. ГОСТпа килĕшӳллĕн пĕрремĕш класлă вăрлăх нӳрĕклĕхĕ 8 процентран ытла пулмалла мар. Чи кирли – вăрлăх яланах типĕ пулни.

### Пăтă çимелле

**? Пĕрмаях пăтă çимелли çинчен калаççĕ. Чăннипех те çав таранах усăллă-ши вара вăл?**

Пур кĕрпе тĕсĕнче те пирĕн рационра çитмен витаминсем (чи малтанах В ушкăнрисем), минерал тăварĕсем, майĕпен ирĕлекен, анчах тутă тытакан кăткăс углеводсем пур. Пăтă организмран наркăмăшлă веществосене кăларакан тата çу ирĕлнине контрольлекен клетчаткăпа пуян. Ку веществосем тĕштырă çимĕçĕнче кăна пур: тĕрлĕ пăтăра тата çăкăрта. Пăтă хырăмлăхпа пыршăлăх чирĕсемпе чирлекенсемшĕн те усăллă. Чи лайăххи – сĕлĕ пăтти, вăл хырăм ыратнине те чакарма пултарать.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

### Ачалăхăм

Ман ачалăх кунĕсем
Пулнă вăрçă çулĕсем.
Уйри çĕрĕк çĕрулми
Маншăн пулнă çимелли.

Вăрçă хыççăн йывăрлăх
Çапса хуçрĕ халăха.
Атте вилнĕ вăрçăра
Йывăр пулнă тăлăха.

Сивĕ хаяр кунсенче
Шăннă, хытнă ал-ура.
Аннен окопсем чавса
Сывлăх юлнă хавшаса.

Хам ачалăх вăхăтне
Нихçан манмĕ ман чĕре.
Аннен татăлчĕ кун-çулĕ
Кĕске ĕмĕрлĕ вăл пулчĕ.

**Нина ПАРАМОНОВА. Вăрнар районĕ, Малтикас Ялтăра.**

## ШӲТЛЕР-И?

Упăшкипе арăмĕ вырăн çинче выртаççĕ. Сасартăк кухньăра такам шакăртаттарни илтĕнет. Арăмĕ упăшкине:

– Кайса пăх-ха, кушак унта мĕн кĕмсĕртеттерет.

Упăшки:

– Эсĕ ăна паян апат çитерне-и?

– Çук.

– Апла пулсан мĕн те пулин хатĕрлет пулĕ.

## СĔНӲ-КАНАШ

• Михĕре упранакан çĕрулми шăтса ан кайтăр тесен унта пĕр-икĕ панулми чикмелле.

• Помидора холодильникра упрамалла мар. Сивĕрех вырăнта выртнипе çимĕçĕн тутипе шăрши япăхать.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, мартăн 30-мĕшĕ**

7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 6.30-7.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Çĕр сум. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Возрождение. (12+) 16.30-17.00 Ялтан яла. (12+) 17.10-18.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 19.10-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, мартăн 31-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 19.10-20.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, апрелĕн 1-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Социальный вопрос. (12+) 15.30-16.00 Мăшăр çунат. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Литература çӳпçинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.10-22.00 Çиларман-шоу. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, апрелĕн 2-мĕшĕ**

6.10-6.30 Тăван юрă-кĕвĕ. 7.10-8.00, 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Тема дня. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Возрождение. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+) 22.30-23.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, апрелĕн 3-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-18.00 Литература çӳпçинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, апрелĕн 4-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.30-10.00 По зову памяти. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.10-17.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, апрелĕн 5-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăм пуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Голос Республики. (12+) 16.30-17.00 По зову памяти. (12+) 17.10-18.00 Çиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад) (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

